# АСĂНМАЛĂХ, САВĂНМАЛĂХ

## *Сăвăç аппăшĕ*

Пире, иккĕмĕш класс ачисене, Георгий Тарасович Печников учитель «Тăван сăмах» кĕнекери сăвва сасăпа вулаттарать.

«Сывлăмлă ир тап-таса,
Çăлран ăснă шыв пекех...»

Çирĕм виçĕ ача сассипе класс пӳлĕмĕ янăраса тăрать. Виçĕ-тăватă хутчен вуласан вĕрентекен чарăнма хушрĕ. «Ку сăвва Василий Давыдов поэт çырнă. Хамăр ялти Пĕчĕк касра Тимĕрçĕ Ваççилипе юнашар Кăлюк аппăр хăйĕн çемйипе пурăнать. Вăл çак сăвва çырнă Васлей Давыдовăн аппăшĕ», – ăнлантарать учитель.

Кăлюк аппана питĕ лайăх пĕлетĕп. Вĕрентекенĕмĕр Георгий Тарасович пирĕнпе хирĕçех пурăнать. Килте унăн манран çичĕ-сакăр çул аслăрах ывăлĕ Володя пур. Ытти ачи çитĕнсе çитнĕ, Тукайран тухса кайнă. Ашшĕ килне вĕсем сайра хутра кăна пырса каяççĕ. Пирĕн вĕрентекенĕн мăшăрĕ Варвара Константиновна – вырăс хĕрарăмĕ. Вăл та ялти ачасене вăтăр çул ытла вĕрентнĕ, Раççей тава тивĕçлĕ учителĕн ятне тивĕçнĕ. Печниковсем иккĕшĕ те утмăла çывхараççĕ. Варвара Константиновна – тивĕçлĕ канура. Кăлюк аппа, Васлей Давыдов сăвăçăн аппăшĕ, Георгий Тарасовичăн шăллĕн Тимушăн арăмĕ пулнă. Тимуш Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче вилнĕ. Кăлюк аппан çемйи пĕчĕкех мар: хĕрĕсем те, ывăлĕсем те пур. Эпир, вĕт-шакăр, унăн аслă ывăлне Тольăна лайăх пĕлетпĕр, вăл салтакран тин çеç килнĕ, купăс калать, ача-пăчапа калаçма та мăн кăмăлланмасть.

Пĕррехинче, авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче, Георгий Тарасович мана учительсен пӳлĕмне чĕнчĕ те кĕнеке тултарнă пысăк хутаç тыттарчĕ, ăна килне кĕртсе пама хушрĕ, хăй те халех тухасси çинчен пĕлтерчĕ. Эпĕ Печниковсем патне кĕнĕ чухне Кăлюк аппа та унтахчĕ.

Каялла тухас йӳтӗмпе алӑк хӑлӑпне тытнӑччӗ кӑна – вӗрентекен хӑй ҫитрӗ. «Гена, ан кай-ха, кӑштах тӑхта», – терӗ. Хӑй кайри пӳртри сада ҫӳремелли алӑкран тухрӗ, тепӗр самантран кӗрсе тӑчӗ. Аллинче – пысӑк-пысӑк пан улми. Георгий Тарасович мӑшӑрне Кӑлюк аппана тата мана сӗтел хушшине ларма сӗнчӗ, ҫӗҫӗ илсе пан улмине тӑватӑ пая касса уйӑрчӗ. «Кин, эсӗ пилӗк ҫул каялла лартнӑ йывӑҫ ҫинче кӑҫал пӗрремӗш хут пан улми ҫитӗнчӗ. Пӗри ав халӗччен те ҫӗре ӳкмен. Татса кӗтӗм. Ҫисе пӑхӑр», – ҫапла пулчӗ унӑн сӑмахӗ. Унччен те, ун хыҫҫӑн та эпӗ ҫакӑн пек тутлӑ пан улми ҫинине ас тумастӑп.

Эрне иртрӗ-и, иртмерӗ те-и – мана Кӑлюк аппан шӑллӗпе кинне – Ваҫлей Давыдов сӑвӑҫпа унӑн мӑшӑрне – курма тӳр килчӗ.

...Кӗрхи хӗвеллӗ те тӳлек кун. Тӑватӑ урок пӗтнӗ хыҫҫӑн киле таврӑнатпӑр. Учитель те пирӗнпе пӗрлех. Печниковсен тӗлне ййӑр кӳлнӗ тӑрантас ҫитсе чарӑнчӗ. Тӑваттӑн ларнӑ. Тилхепине Печниковсен кӗрӗвӗ Петр Петрович тытнӑ. Юнашарах, ларкӑч ҫинче, унӑн арӑмӗ, Георгий Тарасовичпа Варвара Константиновнӑн хӗрӗ Миля. Вӗсем пирӗнтен вун икӗ ҫухрӑмри Аслӑ Арапуҫ ялӗнче пурӑнаҫҫӗ.

Тӑрантас ҫинчен эпир палламан хӗрарӑмпа арҫын та анчӗҫ (мӗнле ҫамрӑк та хитреччӗ ун чухне Василий Ивановичпа Мария Максимовна!). Вӗсем Георгий Тарасовичпа Варвара Константиновнӑна алӑ парса саламларӗҫ, сывлӑх сунчӗҫ. Унтан Георгий Тарасович пирӗн енне ҫаврӑнчӗ те: «Ку ӗнтӗ эсир иртнӗ эрнере вӗреннӗ сӑвва ҫыраканӗ – Василий Давыдов (ун чухне, 1953 ҫулта, Василий Ивановичӑн Анатри хушма ят ҫукчӗ пулмалла. – *Г.У.*), юнашар унӑн мӑшӑрӗ – Мария Максимовна», – тесе пӗлтерчӗ. «Ах, ҫак Тукай ачисем, мӗнле хитре те маттур», – сӑмах хушаймасӑр чӑтаймарӗ тин ҫеҫ килсе ҫитнӗ чипер арҫын. Эпир вӑтаннипе чӑлпар саланса пӗтрӗмӗр. Хӑнасем Печниковсен кайрималтиллӗ пысӑк пӳртне кӗчӗҫ. Тепӗр самантран Во-

лодя Печников велосипед çине ларса Тимуш арăмĕ пурăнакан Пĕчĕк каса вĕçтерчĕ, нумай тăмарĕ – каялла çаврăнса çитрĕ. Ун хыççăнах Кăлюк аппа вашкăртса килни курăнчĕ.

Кĕркунне кас хăвăрт пулать. Хăйă çутнă тĕлелле хăнасем те, Печниковсем хăйсем те Кăлюк аппа патне çуранах тухса утрĕç. «Тимуш арăмĕн сăвă çыракан шăллĕ килнĕ терĕç. Çавăн патне кайрĕç пулĕ-ха. Аппăшне хисеплет, ăслă. Печниковсен тулăх кĕрекине хăварсах Кăлюк патне кĕрсе курасшăн пулчĕ-тĕр-ха. Ачисем куккăшĕпе инкĕшне курса савăнаççĕ ĕнтĕ», – çапла каласа юлчĕç вăрмантан уплюнкка татса таврăнакан хĕрарăмсем.

...Унтанпа часах утмăл çул çитет. Георгий Печников та вилчĕ. Кăлюк аппан пурнăçпа хăйĕн ялĕнчен аякра сыв пуллашма тиврĕ, анчах хăй каланине асра тытса ăна Тукай масарнех пытарчĕç. Варвара Константиновна юлашки çула ăсанни те чылай пулать ĕнтĕ. Василий Давыдов 1953 çулхи кĕркунне Тукая хăнана килсе кайнă хыççăн тата 56 çул пурăнчĕ, 93 çула кайса Шупашкарта вилчĕ. Эпĕ унпа 40 çул ытла тачă çыхăну тытрăм, кӳршĕсем пулса юлашки вăхăтра кашни кун тенĕ пекех тĕл пултăм. «Геннадий! Тукай ялне, унăн çыннисене ман пек юрататакан тата кам пур-ши?» – тетчĕ те хисеплĕ сăвăçăмăр, пирĕн хушăра татăлми калаçу пуçланатчĕ.

## *Поэт хăй*

Çав тĕл пулу хыççăн В.И.Давыдов-Анатрие эпĕ 16 çул пĕрре те курман. 1967 çул вĕçĕнче çартан таврăннă хыççăн Комсомольски районĕнчи «Октябрь ялавĕ» хаçатăн литература сотрудникĕнче ĕçлеме пуçларăм. Ун чухне çĕр-шыв пилĕк кунлă ĕç эрни çине куçайманччĕха. Шăмат кун кăнтăрла иртсе икĕ сехетчен ĕçлеттĕмĕр. çав çулхи раштавăн 28-мĕшĕнче редактор хушнипе «Заря» колхоза командировкăна кайма пуçтарăнтăм.

Тукай еннелле каякан çул хěрринче Володя Печниковпа мăшăрне Валентинăна куртăм. Калаçса кайрăмăр. Раштавăн 26-мěшěнче Кăлюк аппа шăллě Василий Иванович сăвăç аллă çул тултарнă-мěн. Драма театрěпе юнашарти «Театральнăй» кафере В.Давыдовăн юбилей каçě иртнě. Юбилее Володьăпа Вальăна та йыхравланă. Уяв чаплă иртни çинчен вěсем мана пěр-пěрне пӳлепӳлех каласа пачěç. Пěлтермелли те пурахчě çав ěнтě. 1947–1967 çулсенче вăл «Çамрăк ăру», «Пěчěк тусăмсем», «Чěре хушнипе», «Чеменпе Мерчен», «Ытарма çук сире», «Юмахсем», «Эпир – пěр тăвансем», «Илемпи» сăвăсемпе поэмăсен кěнекисене пичетлесе кăларчě. Нумай-нумай композитор унăн сăввисемпе юрăсем çырчě. Вěсем радиопа кашни кун янăратчěç.

1969 çулхи çуркунне Хветěр Уяр прозаик 55 çул тултарчě. Унăн ячěпе вăл çуралнă Самар тăрăхěнчи ялсенче, хамăр республикăри районсенче литература эрнисем иртрěç. Çав çулхи кěркунне черет Комсомольски районне те çитрě. Каçал тăрăхне Уярпа пěрле Александр Кăлкан, Георгий Ефимов, Уйăп Мишши, Владимир Ухли, Василий Давыдов-Анатри килчěç. Пирěн хаçат редакторне Лаврентий Таллерова явăçтарса вěсем райцентрта, ялсенче литература каçěсем ирттерме пуçларěç. Ушкăнра юрлакан-ташлакан артистсем те пурччě. Ěçлеме пуçланă хыççăн çур çултанах мана тěп редактор çумěн тивěçěсене шанса панăччě те, писательсемпе тěл пулма тиврě. Паллашу Василий Давыдов-Анатрипе уйрăмах кăмăллă иртрě. Комсомольскинчен тěп хулана тухса кайиччен вăл мана редакци ěçченěсемпе тěл пулма шухăш пурри çинчен пěлтерчě. Ун чухне район хаçатěнче кайран чăваш литературинче палăрмаллах ят илнě Виталий Шемекеев, Петěр Эревет, Алексей Зайцев ěçлетчěç. Василий Ивановичпа тěл пулма вěсем хаваспах килěшрěç, хăйсен «çанталăк» кěтсе выртакан сăввисемпе калавěсене вуласа тишкерме Давыдова пачěç. Василий Иванович çамрăк çыравçăсене малашне тата та çине тăрарах ěçлеме сěнсе хăварчě.

Çав кĕркуннех пирĕн редактор Лаврентий Васильевич Шупашкара «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине ĕçлеме куçрĕ. Эпĕ райхаçатра икĕ-виçĕ çул урăх редакторпа тар тăкрăм. Каярахпа район хаçачĕн редакторĕнче ĕçлерĕм, Комсомольскинче çемьепе пурăнтăм.

Пĕррехинче, кăнтăрлахи апатран таврăннă май, редакци крыльци çинче арçынпа хĕрарăм ларнине асăрхарăм. Çаксем Василий Давыдов-Анатрипе унăн мăшăрĕ Мария Максимовна пулчĕç. Вĕсен Анат Тимĕрчкассине Кăлюк аппан хĕрĕ Хăвакля Кольцова патне çитмелле-мĕн. Вăл вăхăтра районти çулсем япăхчĕ-ха, автобус та сахал çӳретчĕ. Çав çул пирĕн редакцие çĕнĕ УАЗ автомобиль пачĕç. Вăл картишĕнчехчĕ. Эпĕ сăвăçпа мăшăрне кабинăна лартса Тимĕрчкассине ăсатрăм.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 70–80-мĕш çулĕсенче литература эрнисем ирттерме писательсен ушкăнĕсемпе Василий Давыдов-Анатри Комсомольски районне пĕрре çеç мар пынă. Пурăна киле мана Кĕнеке обществин районти организацийĕн пуçлăхĕ туса хучĕç. Çавăн хыççăн чăваш çыравçисемпе çыхăну тата та çирĕпленчĕ.

80-мĕш çулсен вĕçĕнче шкула учительре ĕçлеме куçрăм. 1989 çулхи ака уйăхĕн вĕçĕнче мана, райцентрти шкулăн ахаль вĕрентекенне, районти парти комитечĕн пĕрремĕш секретарьне суйларĕç. Саламлă пĕрремĕш телеграммăна Василий Ивановичран илтĕм. 80-мĕш çулсен вĕçĕнче сăвăçăн пултарулăхĕ тата та çӳллĕрех шая çĕкленчĕ. Вăл халăх юратакан поэт-юрăç пулса тăчĕ. Ун йĕри-тавра çирĕме яхăн чăваш композиторĕ пĕтĕçрĕ. Филипп Лукин, Григорий Хирбю, Герман Лебедев, Тимофей Фандеев, Аверий Токарев, Виктор Ходяшев, Анисим Асламас унпа çамрăк чухнех тачă ĕçлетчĕç. Кайрантарах ку ушкăна Васильевсем, Олимпиада Агакова, Юрипе Дмитрий Кудаковсем, Геннадий Максимов тата ыттисем хутшăнчĕç. В.Давыдов-Анатри Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ (1976), Чăваш халăх поэчĕ пулса тăчĕ, хăй 70 çул тулта-

рас умĕн ăна «Халăхсен туслăхĕ» орденпа наградăларĕç. çак тапхăрта вăл ачасем валли те, çитĕннисем валли те прозăлла произведени чылай çырчĕ. Унăн «Тимушпа унăн тусĕсем», «Сатин кĕпе», «Пурçăн тутăр», «Маттур Санюк», «Юлташсемпе юнашар», «Юррăмсем – çунатăмсем», «Сăввăмсем – чун парнисем» кĕнекесем тухрĕç.

90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче манăн Шупашкара куçса килмелле пулчĕ. Профсоюзсен «Время» хаçачĕн редакторĕн ĕçĕсене вунă çула яхăн туса пытăм. Икĕ пинмĕш çулсен пуçламăшĕнче Василий Иванович та пирĕнпе юнашарти Сверчков урамĕнчи çурта куçрĕ. Çĕнĕ влаç ăна хур тумарĕ: темиçе пӳлĕмлĕ, икĕ çенĕклĕ пысăк хваттер парнелерĕ, пенси çумне пособи илсе тăмалла турĕ. Телее, вунă çула яхăн эпир кашни кун тенĕ пекех тĕл пултăмăр, пĕр-пĕрин патне хăнана çӳрерĕмĕр. Юлашки вăхăтра унăн патĕнче писательсенчен Михаил Ставский, Николай Кушманов, Хветĕр Агивер час-часах пулатчĕç. В.Давыдов-Анатри поэтюрăç пулнă май унăн хытă хуплашкаллă хулăн кĕнеке сахал тухнă. Ытларахăшĕ хут хуплашкаллă çӳхе кĕнеке. Коля Кушманов ăна хытă хуплашкаллă пилĕк çĕр страницăллă, вунă экземплярлă кĕнеке туса пачĕ. Василий Иванович вăл кĕнекене чи çывăх çыннисене парнелерĕ. Ун пек кĕнекене вырăссем «библиографическая редкость» теççĕ.

Василий Иванович 1917 çулхи раштавăн 26-мĕшĕнче çуралнă. Пурăннă пулсан вăл 2012 çулхи раштав вĕçĕнче 95 çул тултаратчĕ. Çуралнă этем çĕр çинче хăçан та пулсан вилетех. Акă, пирĕн хушăра Василий Давыдов-Анатри те çук ĕнтĕ, анчах унăн çутă сăнарĕ чăваш çыннисен асĕнче яланах упранĕ.